25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ИЮНЬ 28 ВЫРСАРНИКУН 149(6084) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Советсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

133. Элĕк районĕнчи Тавăт ялсоветне кĕрекен **«Сталинит» колхоз** (колхоз председателĕ **Ф. С. Емельянов** юлташ). Колхоз общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе ăнăçлăн туса пырать, унăн 6 ферма: МТФ, СТФ ОТФ, ПТФ, КТФ тата кролик ферми. 1941 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государственнăй плана колхоз ирттерсе тултарнă: мăйракаллă шултăра выльăх тĕлĕшпе — 110 процент, сыснасем тĕлĕшпе—108 процент, сурăхсемпе качакасем тĕлĕшпе 118 процент, кроликсем тĕлĕшпе—123 процент тултарнă. Фермăсенче 1942 çулта мĕнле выльăх-чĕрлĕхе мĕçе пуçа çитермеллине кăтартса панă плана та колхоз пур енĕпе те пурнăçа кĕртнĕ. 1941 çулта, вăтамăн илсе шутласан, кашни сăвакан ĕне пуçне 1009 литр сĕт суса илнĕ, планра 900 литр кăтартса панă. Колхоз Хĕрлĕ Çара çулсеренех темиçешер лаша пăхса ÿстерсе парать, панă лашисем пурте лайăх, мăнтăр. Колхоз государство умĕнчи пур обязательствăсене те вăхăтра татса пырать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçрен колхоз 1941 çулта 35.756 тенкĕ доход илнĕ.

134. Чкаловски районри **«Красное знамя»** колхоз (колхоз председателĕ **И. А. Пирогов** юлташ, кандидатсен группин парторгĕ **Н. С. Кузьмин** юлташ). Колхоз 1942 çулти выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарнă: мăйракаллă шултăра выльăх енĕпе—113 процент, сурăхсем тĕлĕшпе—105 процент, сыснасем тĕлĕшпе—114,3 процент тултарнă. Ытти колхозсенчи фермăсене, вĕсенче выльăх-чĕрлĕх шутне планра кăтартса панă виçене çитермешкĕн, колхоз 80 пуç сысна çури сутнă. Пăрусене контрактацилес плана 146 процент, путексене контрактацилес плана — 100 процент тултарнă.

135. Чкаловски районри **«Канаш» колхоз** (колхоз председателĕ **Макаров** юлташ). 1942 çулти выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана колхоз ирттерсе тултарнă: мăйракаллă шултăра выльăх енĕпе — 137 процент, сурăхсем тĕлĕшпе—142 процент, сыснасем тĕлĕшпе—106 процент тултарнă. Пăрусемпе путексене контрактацилес плана колхоз 100 процент тултарнă. Ытти колхозсенчи фермăсене, вĕсенче выльăх-чĕрлĕх шутне планра кăтартса панă виçене çитермешкĕн, колхоз 90 пуç сысна çури сутнă

Шкулсем çĕнĕ вĕренÿ çулĕ умĕн

Совет шкулĕ отечественнăй вăрçă условийĕсенче иртсе пынă вĕренÿ çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ. Вăрçăн йывăр условийĕсенче те совет шкулĕсем татти-сыпписĕр ĕçлерĕç, вĕрентÿ ĕçне тĕплĕ организацилесе вĕрентÿ пахалăхне хăпартса пычĕç. Коммунистсен партийĕ, совет правительстви, пĕтĕм совет общественноçĕ шкула пур енчен те анлă пулăшу парса пычĕç. Чăваш республикинчи шкулсенче иртнĕ вĕренÿ çулĕнче çĕршер шкул ачисене тумтир тавраш, апат-çимĕç парса тата укçан пулăшу панă. Ытти республикăсемпе облаçсенчен килнĕ ачасем, фронта кайнисен ачисем валли чылай вăтам шкулсенче интернатсем уçса панă, вĕри апат çитерес, çăкăр парас ĕçе организациленĕ. Канаш, Улатăр, Шупашкар хулисенче ачасем валли уйрăм столовăйсем организациленĕ.

Тăлăх ачасене пулăшас енĕпе колхозсем, совет общественноçĕ чылай паллă ĕçсем туса ирттернĕ. Канаш хулинчи активистка-хĕрарăмсем 16 тăлăх ачана усрава илнĕ.

Совет общественноçĕ, колхозсем шкулсене вутă хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе питĕ пысăк пулăшу панă.

Партипе правительство, совет общественноçĕ шкулшăн, ачасене вĕрентсе воспитани парассишĕн куллен тăрăшнине пула, отечественнăй аслă вăрçăн хаяр обстановкинче иртнĕ 1941—42-мĕш вĕренÿ çулĕ республикăри шкулсенче ăнăçлăн вĕçленчĕ. Вĕренекенсен пĕтĕм хисепĕнчен 88 процента яхăн аслăрах класа куçнă е шкула пĕтерсе тухнă. Çуркунне пулса иртнĕ пĕлÿ тĕрĕслевĕсенче пиншер шкул ачисем пурнăçра кирлĕ тарăн пĕлÿсене илнине палăртрĕç.

Халĕ шкулсем умĕнче тăракан паллă задача—çĕнĕ вĕренÿ çулне пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илесси. Çĕнĕ вĕренÿ çулне совет шкулĕ хуçалăх енчен те, методика тĕлĕшĕнчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитмелле: шкул çуртсене юсаса çитермелле, шкул çурчĕсемпе учительсем валли кирлĕ вутта хатĕрлесе турттарса хумалла, партăсене, класс хăмисене юсаса хумалла, шкул участокĕсенче шкулта вĕри апат çитерме кирлĕ çимĕçсене ÿстерсе пуçтармалла. Çав хушăрах учительсен çĕнĕ вĕренÿ çулĕнче ĕçлемелли программăсемпе, методикăсемпе, учебниксемпе тĕплĕн паллашмалла.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă малта пыракан учительсем, шкул директорĕсем çакна лайăх ăнланса илсе хĕрÿ ĕçе тытăннă. Елчĕкри вăтам шкул учителĕсем (Елчĕк р.) хăйсем шкулăн пĕтĕм партисене, класс хăмисене юсаса сăрласа хунă, халĕ шкул çуртне йĕркене кĕртес, вутă хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Етĕрнери туллимар вăтам шкулти учительсемпе шкул ачисем шкула валли 150 кубометр вутă хатĕрлесе хунă. Тури Юнтапари пуçламăш шкул (Канаш р.), унăн заведующийĕ—орденоносец Тихонов пуçарса пынипе, çĕнĕ вĕренÿ çулĕнче кирлĕ вутта пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе çитернĕ, паянхи куна шкул вĕренÿ çулне пур енчен те хатĕр.

Канаш районĕнчи совет тата колхоз общественноçĕ шкулсене вĕренÿ çулне хатĕрлес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлет. Районра шкулсем валли вутă хатĕрлесе турттарса кăларас енĕпе вунăкунлăх ирттереççĕ. Чылай шкулсене çитес вĕренÿ çулĕ валли кирлĕ вутта хатĕрлесе панă та ĕнтĕ.

Анчах хăшпĕр çĕрте советсем, колхозсем шкул çине çителĕклĕ таран çаврăнса пăхмаççĕ-ха. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисемпе витĕнсе хăшпĕр исполкомсемпе колхозсем шкулсене вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕçре тивĕçлĕ пулăшу памаççĕ. Сăмахран, Елчĕк районĕнче шкулсене кирлĕ 5.860 кубометр вутăран 600 кубометрне кăна хатĕрленĕ, вĕсенчен те 400 кубометрне çеç турттарса кăларнă. Райсовет исполкомĕ, райлесзаг, ялсовет исполкомĕсем кунта шкулсем валли вутă хатĕрлес енĕпе нимĕнех те тумаççĕ.

Çавăн пекех шкулсем валли вутă хатĕрлесе турттарас ĕç Калининскипе Кувакино районĕсенче те япăх пырать. Калинински районра планпа палăртнă 4.015 кубометртан шкулсене 316 кубометр çеç турттарса кăларнă. Кувакино районĕнче шкулсем валли вутă турттарас ĕçе тытăнман та.

Çĕнĕ шкул çурчĕсем тăвас, кивĕ çуртсене юсас ĕç те çителĕксĕр пырать-ха. Первомайскинчи вăтам шкул валли çĕнĕ çурта 1941 çулта туса пĕтермелле пулнă, анчах паянхи куна шкул çурчĕн пурине те пураса çитермен. Райсовет исполкомĕ çак строительство çине пÿрне витĕр пăхнине пула, шкул çуртне туса çитерме рабочисене те пухса çитермен.

Республикăра вăтам ремонт тума палăртнă 138 шкул çуртĕнчен паянхи куна 79 çуртне кăна юсама тытăннă.

Вĕренмелли кĕнекесем кăларас ĕçе Шупашкарти типографи тÿсме çук вăраха ярса пырать. Июнĕн 20-мĕш тĕлне кăларса сутмалли 19 учебникран типографи 4 учебнике анчах кăларса панă. Хăшпĕр учебниксем, 1941 çулта производствăна панăскерсем, типографире пĕр хусканусăр выртаççĕ.

Полиграфпромышленность управленийĕ шкулсем валли тетрадьсем хатĕрлес енĕпе ĕçе те тытăнман-ха. Планпа панă тетрадь хутне Шупашкара кÿрсе килес тĕлĕшпе управлени нимĕн те тумасть.

Вĕренÿ çулĕнче шкулсем ăнăçлă ĕçлеччĕр тесен, шкулсене вĕренÿ çулне пур енчен те тĕплĕн хатĕрлесе çитермелле. Парти организацийĕсен, советсен, мĕнпур совет общественноçĕн, шкул енне тивĕçлипе çаврăнса, вĕсене вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕçре чăнласа пулăшса пымалла. Канаш районĕнчи партипе совет организацийĕсем, совет общественноçĕ шкулсене вĕренÿ çулне хатĕрленме пулăшмалли уйрăм кунсĕм ирттерес тĕлĕшпе тунă пуçарăва пĕтĕм республикипе сарса яни кирлĕ.

Вăрçăн йывăр условийĕсен сăлтавĕпе шкул ыйтăвĕсем çине, ачасене вĕрентсе коммунистла воспитани парасси çине çиелтен пăхни—киревсĕр ĕç. Шкулсене валли вăрçă пынă хушăра та ăнăçлăн ĕçлеме условисем туса парасси—парти организацийĕсен, советсен, пĕтĕм совет общественноçĕн паллă задачисенчен пĕри пулса тăрать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 26-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июнĕн 26-мĕшĕнче **Харьков** енче пирĕн войскăсем противникăн наступлени туса пыракан войскисене хирĕç çапăçнă.

Фронтăн **Севастополь** участокĕнче пирĕн чаçсем противникăн темиçе атакине сирсе янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Июнĕн 25-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 89 танкĕпе бронемашинине войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 20 лавне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, зенитнăй тата полевой артиллерин 12 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 6 складне тата горючи тултарнă пĕр автоцистернăна сирпĕнтерсе янă, чугунçул составне çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине 3 батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Июнĕн 26-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле нимĕçсен 14 бомбардировщикĕ Мускав патне пымалли инçетри çулсем çинче вырнаçса ларакан пĕр объект çине вĕçсе пырса тапăнма хăтланнă. Пирĕн зенитчиксем тăшман çине вăйлăн пеме тытăннă тата истребительсем тăшман самолечĕсене сывлăшра атакăланă. Çапăçу нумая пыман, нимĕçсен «Юнкерс-88» йышши 6 самолетне пĕрин хыççăн теприне персе антарнă, ыттисем каялла çаврăннă та тарнă. Пирĕн самолетсен çухатусем пулман. Объект сиенленмен.

* * *

Харьков енче нимĕçсен командованийĕ хăйсен пехотине пулăшмашкăн çапăçăва чылай йышлă танксемпе авиацие кĕртет. Пирĕн войскăсем противникăн атакисене хăйсен пурнăçĕсене хĕрхенсе тăмасăр сирсе-сирсе яраççĕ. Хаяр çапăçусем пулнипе халăх пурăнакан хăшпĕр пунктсем темиçе хутчен те алран алла куçаççĕ. Пирĕн боецсем противника çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питех те пысăк çухатусем кÿреççĕ. Жданов лейтенантăн боецĕсем вырнаçса тăнă дзотсем патнелле нимĕçсен 5 танкĕ çывхарса пынă. Малта пыракан нимĕç танкĕ минăсем çине лексе сирпĕнсе кайнă. Ун хыççăн пыракан машинăсем çине красноармеецсем гранатăсем тата çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем вăркăнтарнă. Нимĕçсен 3 танкне çĕмĕрсе çунтарса янă. Тепĕр участокра красноармеецсем — Корякин, Шенда, Соловьев, Струков тата Ефимович юлташсем, Квятковский лейтенант ертсе пынипе, нимĕçсен 6 танкне пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра гвардейски чаçри боецсем гитлеровецсен виçĕ хаяр атакине сирсе янă, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2000 çынна çити, 60 автомашинине, грузсем тиенĕ 90 лавне тата противникăн 4 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Противникăн пехоти Поликарпов лейтенантăн роти йышăнса тăракан позицие атакăланă (Брянск фрончĕ). Нимĕçсем оборонăн малти линийĕ урлă çĕмĕрсе каçма пултарнă, вара пирĕн боецсем штык вĕççĕн тăрса çапăçса 150 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Пирĕн артиллерин чаçĕ (Кăнтăр Хĕвеланăç фрончĕ) вăйлăн персе противникăн 4 орудине, çар грузĕсем тиенĕ 25 лавне тата нимĕçсен пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Боевой задание пурнăçа кĕртнĕ чухне летчик-истребительсем Ильин, Мальченко, Корчемак тата Роев юлташсем «Мессершмитт» йышши 7 самолета тĕл пулнă. Сывлăшри çапăçура Ильинпа Мальченко юлташсем кашниех противникăнне пĕрер самолет персе антарнă. Унсăр пуçне тата пĕр «Мессершмитта» ушкăнпа персе антарнă. 3 самолет çухатнă хыççăн нимĕç летчикĕсем, текех çапăçса тăмасăр, аякалла вĕçсе кайнă.

* * *

Белорусси партизанĕсем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене хирĕç ăнăçлăн кĕрешеççĕ. Партизансен М. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ çĕрле противникăн гарнизонне тапăннă та 58 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, 2 пулемет тата 30 винтовка тытса илнĕ. Х. юлташăн отрядĕнчи партизансем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Темиçе кунран, нимĕçсем çав çула тÿрлетсе çитерсенех, совет патриочĕсем противникăн чугунçулпа пыракан татах тепĕр составне ÿпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 132-мĕш пехотнăй дивизийĕн 436-мĕш полкĕнчи 10-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Фердинанд Генгер çапла каласа панă: «Севастополь çине наступлени пуçличчен 10-мĕш ротăра 140 çын тăратчĕ. Çапăçусен малтанхи кунĕнчех рота 75 салтак çухатрĕ, вĕсенчен хăшĕсем вилнĕ, хăшĕсем аманнă. Ытти ротăсенче татах та ытларах пĕтнĕ. Чĕрĕ юлнă салтаксен шухăшкăмăлĕсем питех те начарланса çитнĕ. Пурте вĕсене такам пуçран пырса çапнă пек çÿреççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем çакна лайăх пĕлсе тăраççĕ: вĕсене пурне те вилĕм кĕтсе тăрать, вĕсем пурте паян вилмесен те ыран хăтăлса юлайрас çук».

* * *

Юлашки уйăхра Милан хулине (Итали) хай вăхăтĕнче Германие ĕçлеме янă 50 итальянец таврăннă. Вĕсем гитлерла каторгăран тарса тухма пултарнă. Тăван çĕршывне çитнĕ итальянецсем çапла каласа панă. Германи промышленноçĕнче ĕçлекен ютçĕршыв рабочийĕсем валли этем тÿсме çук условисем туса хунă. Нимĕçсем вĕсене выльăх вырăнне кăна хураççĕ. Кунсеренех вырăпа тата каторгăлла ĕçпе асапланса çĕршер çын вилет. Рабочисем каласа кăтартни халĕха хытă хумхантарса янă. Вара фашистсен влаçĕсем Германирен тарса килнĕ пур итальянецсене те арестлеме приказ панă

Июнĕн 27-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июнĕн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле **Харьков** тата **Севастополь** енĕсенче пирĕн войскăсем противника хирĕç çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Севастополе хÿтĕлекен пирĕн паттăр боецсемпе командирсем нимĕçсен фашистла войскисене питĕ пысăк çухатусем тÿстереççĕ. Пĕр кун хушшинче пирĕннисем артиллерирен персе кăна та нимĕçсен пехотине пĕр полка çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă, артиллерин виçĕ батарейине тата минометсен темиçе батарейине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Брянск фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсем пехотăн виçĕ батальонне çити вăйпа пирĕн позицисем çине наступлени тума тытăннă. Нечаев юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсем противникăн атакине ăнăçлăн сирсе янă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 300 çын ытла вилсе е аманса юлнă. Тепĕр участокра гитлеровецсем халăх пурăнакан пункта, пирĕн часть йышăнса тăракан-скере, тытса илме хăтланса пăхнă. Хăйсене вăйлăн хирĕç тăнине курса тата 170 салтакпа офицера çухатса, нимĕçсем каялла чакнă. Пирĕн боецсем 10 пулемет, 23 винтовка, 10 автомат, 2 ротнăй миномет тата боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн уйрăм участокĕсенче пирĕн артиллери нимĕçсен 2 орудине, темиçе пулеметне тата 150 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Серебряков юлташ командир пулса тăракан чаçри гвардеецсем (Калинин фрончĕ) пĕр эрне хушшинче нимĕçсенне 5 танк, 16 пулемет, 6 миномет-расчечĕсемпе пĕрлех, боеприпассем тиенĕ 2 лава тата 400 салтакпа офицера çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче икĕ кун хушшинчи çапăçусенче 200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллери тата разведка тăвакан ушкăнсем противникăн 17 дзотне блиндажне, 8 наблюдательнăй пунктне çĕмĕрнĕ, пĕр орудие, минометсен батарейине, 12 станковăй пулемета пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен «Мессершмитт-109-ф» йышши 20 самолечĕ 6 совет бомбардировщикне атакăланă. Штурмансем Миронов, Козаченко, Афанасьев тата Борисов юлташсем, стрелок-радистсем Рапопортпа Арсеньев, пулеметсен вучĕпе пĕрпĕрне пулăшса пырса, противникăн 2 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Летчик Ченский «Мессершмитт-109» йышши 7 самолета хирĕç çапăçма тытăнса, нимĕçсен пĕр самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Калинин облаçĕн оккупациленĕ районĕсенче кĕрешекен партизансен Р. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ пĕр паха чугунçул çинчи кĕпере сирпĕнтерсе янă. Çав чугунçул тăрăх вара çÿреме чарăннă.

* * *

Финсен 11-мĕш пехотнăй полкĕнчен Хĕрлĕ Çар енне каçса килнĕ Р. Исакки çапла каласа панă: «Çуркуннехи çапăçусенче пирĕн полка питĕ вăйлă ласкарĕç. Хăшпĕр ротăсем йăлтах юнсăрланса юлнă. Пире вырăс снайперĕсем питĕ пысăк çухатусем тÿстереççĕ. Нумаях пулмасть вĕсем батальонăн командирне майора вĕлерчĕç. Салтаксем уççăнах çапла калаççĕ: ку вăрçă пире йĕрĕнтерсе çитерчĕ, теççĕ. Пирĕн полкран 130 çын тарса кайнă ĕнтĕ».

* * *

Çапăçу хирĕнче нимĕç подполковникĕ Шмидт патне унăн арăмĕ янă çырăва тупнă. Аяларахра çав çырăвăн хăшпĕр вырăнĕсене илсе пичетлетпĕр: «Гитлер тухса каланă сăмах малашне лайăх пулассине пĕрех те пĕлтермест. Урса кайнă карма-çăварсем те ĕнтĕ пуçĕсене усрĕç, шăп пулчĕç. Сывлăшран килсе тапăнас хăрушлăх эпир ĕлĕкрех шухăшланă пек инçех мар ĕнтĕ. Эпĕ халĕ те Любекра, Кильре, Ростокра тата Кельнра пулса иртнисем çинчен шухăшласа пурăнатăп-ха. Кунта шăппăн тата хăраса çакăн пек пĕлтереççĕ: Англия пăрахакан листовкăсенче Англия малашне бомбăсем пăрахма шутланă çĕнĕ хуласен ячĕсене кăтартнă, теççĕ. Çак сăмах тĕрĕс пулсан, пирĕншĕн питех те хăрушă кунсем килсе çитеççĕ вара».

* * *

Противникăн инçери тылĕнчен нумаях пулмасть таврăннă партизан М. Алексей юлташ çапла каласа панă. «Псковăн урамĕсенче нимĕçсен приказĕсене çыпăçтарса тухнă. Захватчиксем хулари çынсене çапла каласа хăратаççĕ: «Урама хĕвел тухиччен тухсан—вилĕм, урама хĕвел ансан тухсан—вилĕм», теççĕ. Анчах хăраса пĕтнĕ халăх кăнтăрла та килĕсенчен тухма шикленсе тăрать. Нумаях пулмасть гитлеровецсем 14 çултан пуçласа 65 çула çитнĕ арçынсене пурне те площаде хăваласа пухнă та, вĕлерессипе хăратса, хулара вăрттăн ĕçлекен совет активисчĕсене тытса пама хушнă. Халăх пĕр шарламасăр итлесе тăнă. Никам пĕр сăмах чĕнмен. Вара палачсем ушкăнран 150 çынна илсе тухнă та вĕсене пухăннă халăх умĕнчех персе пăрахнă. Хĕрлĕ Çар çурчĕ умĕнче канализаци люкĕнче нимĕç офицерĕн виллине тупнă. Гестаповецсем алă айне пулнă мирлĕ 18 çынна тытнă та çакса вĕлернĕ.

РСФСР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

РСФСР Верховный Советне суйламалли срока куçарасси çинчен

Вăрçă вăхăтĕнчи обстоятельствăсене кура РСФСР Верховный Советне суйламалли срока çулталăклăха куçарас. РСФСР пĕрремĕш созыври Верховный Совечĕн полномочийĕсене çав срокăлăха тăсас.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ А. БАДАЕВ.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ П. БАХМУТОВ.

Мускав, 1942 çулти юнĕн 20-мĕш.

Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе тĕлпулусем туса ирттереççĕ

КАНАШ. Партбюро пуçарнипе вагонсем юсакан заводри рабочисем отечественнăй вăрçă участникĕсемпе час-часах тĕлпулусем туса ирттереççĕ. Нумаях пулмасть рабочисем фронтран вăхăтлăха таврăннă танкистсемпе пуханса калаçрĕç. Танкист-орденоносецсем Ильин, Капустин тата Смирнов юлташсем фронтри боецсемпе командирсен тĕлĕнмелле паттăрлăхĕпе хăюлăхĕ çинчен, нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсен тискер хайăкла ĕçĕсем çинчен каласа пачĕç. Паттăр фронтовиксемпе тĕлпулни рабочисен ĕçлес тата Хĕрлĕ Çара пулăшас кăмăлне ÿстерет.

П. Н.

Заем укçине вăхăтра тÿлес пулать

СЕНТЕРВАРРИ. Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне сарас тата унăн укçине пухас тĕлĕшпе кăçал колхозниксемпе колхозсем лайăх пример кăтартрĕç. Анаткасси ялсоветне кĕрекен колхозниксем заема 45.500 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех тÿлесе татрĕç. Унсăр пуçне кунти колхозсем хăйсем заемăн процентлă кăларăмне 16.800 тенкĕлĕх çырăнса, подписка укçине кĕске вăхăтрах районри перекет кассине куçарчĕç.

Анчах заем укçине тÿлес ĕçе ялсоветĕнчи тĕрĕ тĕрлекен тата «Малалла» артельсем çаплах тăсса пыраççĕ. Артельсен руководителĕсем Алексеевпа Смирнова юлташсем çак ĕçе вăхăтра тума кирлине манса кайнă пулас.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

ВКП(б) Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

Хĕрлĕ Чутай районне тата Хĕрлĕ Чутай МТС-не куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав панă

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Хĕрлĕ Чутай районне 1942 çулти çуракин государство планне пур тĕрлĕ культурăсем тĕлĕшпе те республикăра пуринчен малтан пурнăçа кĕртнĕшĕн Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне памалла тунă.

Çавăн пекех Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕ Хĕрлĕ Чутай МТС-не те тракторсемпе тумалли ĕçсен планне республикăра пуринчен малтан пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре шĕвек горючие 8,8 процент чухлĕ, хытă горючие 14 процент чухлĕ перекетлесе хăварнăшăн Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне панă.

—⊙—

В. М. Молотов юлташăн докладне сÿтсе-яваççĕ

КАЛИНИНО. Районри колхозсемпе учрежденисенче В. М. Молотов юлташăн Совет Союзĕпе Англи хушшинче тунă договора ратификацилесси çинчен СССР Верховный Советĕнче тунă докладне сÿтсе-яваççĕ. Çавна май колхозниксем, служащисем хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ.

Çак кунсенче «Броневик» колхозри колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. В. М. Молотов юлташăн докладне итленĕ хыççăн, колхозниксем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнма кăмăл турĕç, хăйсем çине обязательствăсем илчĕç. Вĕсем кăçал кашни гектартан 115 пăт тĕштырă туса илме пулчĕç. Уборкăна правительство кăтартнă срокра ирттерме сăмах пачĕç. Государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçлама йышăнчĕç. Утă çулассине июлĕн 5-мĕш тĕлне вĕçлеме пулчĕç. Çавăн пекех колхозниксем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те татăклă обязательствăсем илчĕç.

В. М. Молотов юлташăн докладне нумаях пулмасть «Комсомол», «Смычка» колхозсенче те сÿтсе-явнă. Ун хыççăн «Смычка» колхоз государствăна 1942 çулшăн тырă памалли плана пĕлтĕрхи пырăлах тултарнă. Çитес кунсенче ашкакай планне те тултарать.

Г. СКВОРЦОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ЧКАЛОВСКОЕ. (**Хамăр корр**). Великобританипе договор туни тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительствипе килĕшÿ туни колхозниксен ĕçлес хастарлăхне татах та ÿстерчĕ.

Учитель Хисаимов юлташ «Кзыл Тан» колхозра, уйра, çум çумланă çĕрте, колхозницăсене В. М. Молотов докладне вуласа пачĕ. Доклада итленĕ хыççăн колхозницăсем нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах пĕтерсе тăкмашкăн Хĕрлĕ Çара стахановла ĕçленипе пулăшма пулчĕç.

В. М. Молотов юлташ докладне итленĕ хыççăн звеновод пулса ĕçлекен М. Вамитова çапла каларĕ:

— Верховный Совет ларăвĕ ССР Союзĕн тулашри политикине ырлани, Великобританипе пирĕн çĕршыв хушшинче Союзлă Договора ратификацилени эпир çĕнтерÿ çулĕ çинче тăнине тата вăл çĕнтерĕве пирĕн Хĕрлĕ Çар çывхартса пынине кăтартса парать. Манăн звено кăçал вăтам шутпа кашни гектартан 120 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешет. Хамăрăн умри задачăна чыслăн пурнăçлассишĕн эпир куллен тимлĕн ĕçлесе пыратпăр.

Вамитова юлташ ертсе пыракан звено халĕ çум çумлас ĕçре кулленхи нормăна тăтăшах 150—175 процент тултарса пырать. Молотов юлташăн докладне ырласа, ку звенори колхозница Х. Хуçнутдинова юлташ ĕç нормине яланах икĕ хут ытла пурнăçласа пыма сăмах пачĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

—⊙—

Пионерсемпе шкул ачисем çум çумланă çĕрте

ИШЛЕЙ. Пионерсемпе шкул ачисем колхоз производствине активлăн хутшăнаççĕ. Халĕ вĕсем çум çумланă çĕрте ĕçлеççĕ

Мамăш ялсоветĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри çамрăк ачасем пăрçа йышши культурăсене çумкурăксенчен тасатса пĕтерчĕç. Ку ĕçре туллимар вăтам шкулти О. Смирнова, М. Александрова, М. Аксенова, А. Курбатова вĕренекенсем уйрăмăнах лайăх ĕçлерĕç.

«Хĕрлĕ Çăлтăр» колхозра та (Ямайкасси ялсовечĕ) вĕренекенсем çум çумлас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. М. Михайлов, Г. Игнатьев, И. Яковлев, Н. Степанов, Л. Гаврилов, А. Куприянов вĕренекенсем 3 кун хушшинче 4 гектар çинчи çĕрулмине çумласа пĕтернĕ. Халĕ вĕсем ытти культурăсене çумлама çÿреççĕ.

З. МИТРОФАНОВА.

МТС-семпе колхозсенчи социализмлӑ ӑмӑрту

Панӑ сӑмаха пурнӑҫа кӗртеҫҫӗ

ҪЕМЕРЛЕ. («Чӑваш Коммуни» корр.). Машинно-тракторнӑй станцинче ӗҫлекенсем, Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, хӑйсем ҫине татӑклӑ обязательствӑсем илнӗ. Паллӑ комбайнерсем Михайлов, Медведев тата Чекменев юлташсем комбайнсене июнӗн 25-мӗшчен пӗтӗмпех юсаса пӗтерме, кӑҫал 350—500-шер гектар тырӑ вырма сӑмах пачӗҫ.

Комбайнерсем хӑйсен сӑмахне тивӗҫлӗн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен комбайнӗсене юсаса ҫитерчӗҫ. Комбайнсене юсас ӗҫре вӗсем вырӑнти ресурссемпе туллин усӑ курчӗҫ, машинӑсен уйрӑм деталӗсене хӑйсемех турӗҫ.

Трактористсенчен уйрӑмӑнах пӗрремӗшпе улттӑмӗш бригадӑсем малта пыраҫҫӗ. Вӗсем ҫӗртме сухи тумалли графика лайӑх пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Пӗрремӗш бригадӑри Курочкинпа Столбов трактористсем кулленхи нормӑна 170 процент, уйрӑм кунсенче 200 процент тултараҫҫӗ.

Улттӑмӗш бригадӑра Семеновпа Михайлов трактористсем малта пыраҫҫӗ. Ҫӗртме сухине тунӑ ҫӗрте вӗсем, вӑтамран илсен, кашни кунах 1,5 норма туса ӗҫлеҫҫӗ.

Х. ЛИСИН.

ТЫРӐ ВЫРМА ХАТӖРЛЕНЕҪҪӖ

ЭЛЕК, июнӗн 27-мӗш. (Телефонпа). Вӑйлӑ тырпултӑн пыракан Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, Ките-Кушкинчи «Ҫӗнӗ ҫул» колхоз членӗсем хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑсене халь лайӑх пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Ҫак кунсенче колхозниксемпе колхозницӑсем ҫуртри калчисене пӗр хут ҫумласа тухрӗҫ, иккӗмӗш хут 17 гектар ҫумланӑ. Паян-ыранах ҫӗртме туса пӗтереҫҫӗ. Ҫакӑнпа пӗрлех колхозра тырӑ вырма тухма хатӗрленес ӗҫ те хӗрӳллӗн пырать. Ялхуҫалӑх машинисене юсаса пӗтернӗ. Ҫӗрмелли япаласене (тикӗт, машина ҫӑвӗ) ҫителӗклӗ хатӗрленӗ. Колхоз кашни лаша пуҫне пӗр урапа тата лаша хатӗрӗсем хатӗрлесе хунӑ. Утӑ ҫулма тухма колхозниксем пур енчен те хатӗр.

М. КУСТИКОВ.

ӖҪКУНӖСЕН МИНИМУМНЕ ИРТТЕРСЕ ТУЛТАРНӐ

ШАХАСАН. (Хамӑр корр.). Тимӗрчкассинчи «Красный луч» колхоз членӗсем партипе правительство «Колхозниксем обязательнӑй йӗркепе ӗҫлесе тумалли ӗҫкунӗсен минимумне ӳстересси ҫинчен» йышӑннӑ постановление чыслӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Колхозра ӗҫлеме пултаракан ҫынсенчен ӗҫкунӗсен минимумӗн пӗрремӗш срокри нормине 120 колхозник иртттерсе тултарнӑ, 12 колхозник ҫак хушӑра 100—150-шар ӗҫкунӗ ытла ӗҫлесе тунӑ. Пӗрремӗш бригадӑра ӗҫлекен колхозницӑсем И. Иванова—104 ӗҫкунӗ, М. Афанасьева—167 ӗҫкунӗ, И. Ефимов—120 ӗҫкунӗ, Н. Кузнецов 115 ӗҫкунӗ ӗҫлесе тунӑ.

Колхозниксен анлӑ масси кӑҫал ялхуҫалӑхӗнчи ӗҫсене нихӑҫанхинчен те хастарлӑрах туса пырать, отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗн ӗҫлет. Ҫак вӑхӑтрах колхоз производствинче сӳреккӗн ӗҫлекен колхозниксем те пур-ха. Вӗсем колхозсенче вуншарӑн ҫеҫ шутланаҫҫӗ пулсан та, хальхи вӑхӑтра ку пысӑк ҫитменлӗх пулать.

«Оборона» колхозра кӑҫал колхозниксем ӗҫре пысӑк хастарлӑхпа ӗҫлени курӑнать. Кунта колхоз производствинче куллен ӗҫлеме пултаракан 98 ҫынран июнӗн 15-мӗшчен 17 колхозник 30—40-шер ӗҫкунӗ, 72 колхозник 40—100 ытла ӗҫкунӗ ӗҫлесе тунӑ. 9 колхозник ҫеҫ ӗҫрен пӑрӑнса кахалланса ҫӳренӗ. Вӗсен колхозниксем хушшинче нимӗнле авторитет та ҫук, вӗсене колхозниксем сивлеҫҫӗ.

С. ШАДИН.

Кашни колхознике ӗҫе пӗлсе вырнаҫтарнӑ

СӖНТӖРВӐРРИ. Районра малта пыракан «Красная Армия» колхозра СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ колхозниксем тумалли ӗҫкунӗсен минимумӗ ҫинчен йышӑннӑ постановлени аван пурнӑҫа кӗрсе пырать.

Ку колхозра ӗҫе юрӑхлӑ колхозниксем пурӗ 94 ҫын. Вӗсенчен 84 ҫын постановленипе кӑтартса панӑ пӗрремӗш срокчен тумалли ӗҫкунӗсене ытлашшипех ӗҫлесе илнӗ. Ильина Евдокия колхозница — 5 ача амӑшӗ. Вӑл 87 ӗҫкунӗ тунӑ. Зинаида Андреева колхозницӑн та 5 ача. Ҫапах та вӑл 123 ӗҫкунӗ тума ӗлкӗрнӗ.

«Красная Армия» колхозра ачасем те ӗҫе активлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Вӗсем пысӑк кӑмӑлпа ӗҫлеҫҫӗ, хӑйсен маттурлӑхне кӑтартаҫҫӗ. 14 ҫулти А. Панов ҫуракинче сӳре сӳрелерӗ, суха турӗ, халӗ ҫум ҫумланӑ ҫӗрте ӗҫлет. Вӑл ачасем валли кӑтартнӑ ҫулталӑкри минимума халех ытлашшипех тултарнӑ. Ҫамрӑк ача Н. Верхолетов та аван ӗҫлет, пурӗ 56 ӗҫкунӗ тунӑ.

Колхоз правленийӗ ачасене кашнинех хӑйне уйрӑм кӗнеке парса тухнӑ. Ачасен ӗҫкунӗсене иртнӗ ҫулсенчи пек ашшӗ-амӑшӗсен кӗнекисем ҫине мар, хӑйсене уйрӑм ҫырса пыраҫҫӗ.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн постановленине пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе колхоз правленийӗн председателӗ Анкудинов юлташ аван ӗҫлет. Унӑн кирек-мӗнле ӗҫ те план тӑрӑх пулса пырать. Вӑл колхозниксене кашнинех лайӑх пӗлет, кама ӑҫта, мӗнле ӗҫе ярсан аван пулассине чухлать, вӗсен пултарулӑхне тата килти условийӗсене шута илет. Сӑмахран, Е. Ильина колхозница, 5 ачаллӑскер, килтен инҫех тухса каяймасть. Ҫавӑнпа ӑна колхоз правленийӗ фермӑри вылӑхсем валли апат-ҫимӗҫ илсе пырса тӑма уйӑрнӑ. Красноармеец арӑмне — Базарова колхозницӑна фермӑра свинарка пулса ӗҫлеме кӗртнӗ. Ку колхозра кашни ҫын шутра, вӗсене ӗҫе пӗлсе вырнаҫтарнӑ.

К. РОСТОВЦЕВ.
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

ФЗӨ шкулӗ социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑннӑ

Сӗнтӗрвӑррири ФЗӨ шкулӗнче вӗренекенсем [illegible] училищисен тата фабрикӑпа завод ӗҫӗсене вӗренмелли шкулӗсен Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвне хутшӑнчӗҫ. Ӗҫ Резервӗсен Главнӑй Управленийӗпе ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗ туса ҫирӗплетнӗ ӑмӑрту условийӗсене [illegible] шкул коллективӗ хӑй ҫине ҫакӑн пек обязательствӑсем илнӗ: прогул тумалла мар, [illegible] «хорошо» тата «отлично» паллӑсемпе вӗренсе пырса, 3-мӗш, 4-мӗш разрядлӑ рабочисем пулса тухмалла.

В. Максимов, И. Яковлев, Н. Семенов, Н. Тихонов вӗренекенсем хӑйсен ҫине илнӗ обязательствӑсене пурнӑҫлас ӗҫре пысӑк тӗслӗх кӑтартаҫҫӗ. [illegible] ФЗӨ шкулӗ 4-мӗш разрядлӑ рабочи пулса вӗренсе пӗтерме тӑрӑшаҫҫӗ. [illegible] П. Горбунков, В. Николаев, И. Сергеев, А. Константинов, П. Вилков, Д. Иванов вӗренекенсем те ӗҫре начар мар тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ.

ФЗӨ шкулӗнче вӗренекенсем ҫарпа физкультура ӗҫне [illegible]. Нумаях пулмасть вӗсем [illegible] кросне хутшӑнчӗҫ. Унта вӗсем пӗрремӗш вырӑна тухрӗҫ.

Шкул коллективӗ [illegible] «Оссавиахим Чувашии» ятлӑ звенине тума 300 тенкӗ укҫа пачӗ.

[illegible]

А. РАЗИН.

Ӑманӑ боецсене пулӑшаҫҫӗ

ШАХАСАН. Калинин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем самолетсен «Оссавиахим Чувашии» ятлӑ звенине тума 600 тенкӗ укҫа пухса пачӗҫ. [illegible] 114 литр сӗт, 2 килограмм ҫу, 150 ҫӑмарта, 2 килограмм пыл персе пачӗ.

А. ОРЛОВ.

Тимӗр-тӑмӑр пухасси малалла пырать

ШАХАСАН. Атнашри всевобуч боецсем тимӗр-тӑмӑр пухас ӗҫе малалла туса пыраҫҫӗ. Пӗр кун ирхине ирех тухса вӗсем ҫур сехет хушшинче пӗр тоннӑна яхӑн тимӗр-тӑмӑр тата 5 килограмм тӗслӗ металл пухрӗҫ.

Пӗтӗм тӗнчере вӗҫсе пӑхса тухни

1942 ҫулти июнӗн 19-мӗшӗ—26-мӗшӗ

Гитлерла Германи СССР Союзӗ ҫине ултавлӑн килсе тапӑннӑранпа ҫулталӑк тултарнӑ май, [illegible]

[illegible] страци пулса тӑчӗ. Фашистла Германия мӗнпур цивилизацилле тӗнчерен таталса пӗччен тӑрса юлчӗ. Совет Союзӗ вара пӗтӗм тӗнче умне тӗксӗм варварствӑран хӑтӑлас шанчӑкӗн, этемлӗхӗн ҫутӑ малашлӑхӗ килес шанчӑкӗн маякӗ пек тухса тӑчӗ.

ОБОЗРЕВАТЕЛЬ.

Англин пин самолечӗ Бремен ҫине вӗҫсе пырса тапӑннӑ

ЛОНДОН, июнӗн 26-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, июнӗн 26-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле Англин пин ытла самолечӗ Бремен ҫине вӗҫсе пырса бомбӑсем пӑрахнӑ.

Бремен вӑл хӑйӗн пысӑкӗшӗпе Германи порчӗсем хушшинче иккӗмӗш вырӑнта тӑрать. Унта вагонсем тӑвакан заводсемпе суднӑсем тӑвакан заводсем нумай. Бомбӑсене Дешимаг фирмин (Дейтше Шифф унд Машиннен̄бау Акционен Гезельшафт ятлӑ фирмӑн) суднӑсем тӑвакан завочӗ ҫине пӑрахнӑ, ҫак завод вӑл Германин подводнӑй лодкисем тӑвакан чи пысӑк предприятийӗсенчен пӗри пулса тӑрать; тата Фокке-Вульфӑн авиаци завочӗ ҫине пӑрахнӑ, ҫак заводра уйрӑм пайсенчен истребительсем тата «Кондор» ятлӑ 4 моторлӑ бомбардировщиксем пухаҫҫӗ.

Авиаци министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Бремен ҫине бомбӑсем пӑрахнипе вӑйлӑ пушарсем тухнӑ, анчах, хулана ҫӑра тӗтӗм хупӑрласа илнӗ пирки, ҫав атакӑсен результачӗсене пӗлме питӗ йывӑр пулнӑ.

Противникӑн оборонине йӗркерен кӑларас тесе, самолетсем Бремен ҫине вӗҫсе пырса тапӑннӑ чухне бомбардировщиксемпе истребительсен темиҫе соединенийӗ Голландири темиҫе аэродрома вӑйлӑн атакӑланӑ. Ҫӗрле туса иртттернӗ мӗнпур операцисенчен хӑйсен базисене 52 самолет таврӑнман.

Англипе Германи хушшинчи сывлӑшри вӑрҫӑ

ЛОНДОН, июнӗн 25-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: июнӗн 25-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле противникӑн самолечӗсем Англин хӗвелтухӑҫ ҫыранӗсем урлӑ каҫса ҫӗршывӑн шалти вырӑнӗсене ҫитнӗ. Англин хӗвелтухӑҫ пайӗнчи чылай пунктсенче тата центрти графствӑсенче вут хыптаракан тата фугаслӑ бомбӑсем пӑрахнӑ. Пӗр пунктра паллӑ сиен тунӑ. Нумаях пулмасть Саутгемптон ҫине вӗҫсе пырса тапӑнни ҫинчен калакан хыпарсем ҫакна кӑтартаҫҫӗ: хула ҫине юлашки хут тапӑннӑранпа нумай вӑхӑт иртнӗ пулин те, хулана сывлӑшран тапӑннинчен хӳтӗлес ӗҫре лӑпланса ларни пӗртте пулман, яланах тивӗҫлипе хатӗр тӑнӑ. Чи юлашки тапӑнура вут хыптаракан бомбӑсене темӗн чухлех пӑрахнӑ пулин те, пушарпа кӗрешекен отрядсем пушарсем сарӑлассине чарса лартнӑ.

Партизанла движени оккупантсен сехрине хӑпартать

Розенберг уҫҫӑнах йышӑнни

СТОКГОЛЬМ, июнӗн 26-мӗш. (ТАСС). Гитлерла чиновниксем оккупациленӗ совет районӗсенче ӗҫлеме ытла та йывӑрри пирки ӳпкелешеҫҫӗ. Розенберг Украинӑра пулнӑ чухне гитлерла комиссар Кох сӑмах тухса каланӑ. Кохӑн ҫакна ирӗксӗрех йышӑнма тивнӗ: «Германин Украинӑра ӗҫлекен мӗнпур деятелӗсем, районсенчи комиссарсем тата ялхуҫалӑхне ертсе пыракан ҫынсем хӑйсен вырӑнӗсенче час-часах тӑр-пӗччен ӗҫлеҫҫӗ». Розенберг хӑй кунтан та уҫҫӑнтарах каланӑ; Украинӑн оккупациленӗ районӗсенчен таврӑнсан вӑл ҫапла каланӑ: Германи влаҫӗсене «вырӑнти халӑхпа пӗрле килӗштерсе ӗҫлессине йӗркелесе яма май килмен, пур ҫӗрте те хӗҫпӑшаллӑ отрядсем ҫӳреҫҫӗ, вӗсем нимӗҫ бургомистрӗсемпе старостисене тыта-тыта вӗлереҫҫӗ», — тенӗ.

Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе Англире ҫар промышленноҫӗ вӑйлӑн ӳсет

ЛОНДОН, июнӗн 26-мӗш. (ТАСС). Информаци министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Англин ҫар производствин министрӗ Литтлтон пресс-конференцире Англипе Америкӑн государство промышленноҫӗсене пӗрлештересси ҫинчен тунӑ килӗшӗвӗн хӑшпӗр енӗсем ҫинчен каласа панӑ. Литтлтон каланӑ тӑрӑх, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен программине масаллӑ производство принципӗсемпе тунӑ, ҫакна ӑна Англире тума май килмест, Англире противник сывлӑшран килсе тапӑнас хӑрушлӑх пур пирки заводсене тӗрлӗ ҫӗре куҫарса вырнаҫтарма лекет. Литтлтон ҫакна ҫирӗплетсе каланӑ: пӗтӗмӗшпе илсен, Америкӑпа Англире пур йышши самолетсем те туса кӑларасси мӗнпур тӗнӗл держависем туса кӑларма пултарнинчен иртсе каять.

Америка производствӑна ҫавтери пысӑк масштабпа сарма пултарни питех те хаваслантарать, тенӗ Литтлтон. Детройтра мирлӗ вӑхӑтра моторсем тунӑ, халӗ ӗнтӗ кашни завод ҫар заказӗсене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе ӗҫлет. Ҫав заводсенчен пӗринче ҫӗр пин рабочирен кая мар ӗҫлет. Америкӑра производство малалла ӳсессине чӗртавар ҫитсе пыманни ҫеҫ кӑштах чарса тӑрать; чӗртавар ытӑвӗ питех те пысӑк ыйту пулса тӑни Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенчи строительство программи анлӑн сарӑлнине кӑтартса парать.

Англи туса кӑларакан продукци пирки сӑмах хускатса, Литтлтон ҫапла каланӑ: продукци туса кӑларасси тепӗр темиҫе уйӑхран чи ҫӳллӗ виҫене ҫитет, тенӗ. Ҫав виҫе мӗн чухлӗ пулассине Англире ӗҫ вӑйӗ тӗлӗшпе тӑракан ыйту татса парать. Анчах та Литтлтон ҫакна шантарса каланӑ: кашни рабочи хӑйӗн ӗҫ тухӑҫлӑхне татах та ытларах хӑпартсан, ҫӗршыв ҫар материалӗсене татах та ытларах туса кӑларма пултарать.

Рузвельтпа Черчилль США конгресӗн руководителӗсемпе канашлани

ВАШИНГТОН, июнӗн 26-мӗш. (ТАСС). Рузвельтпа Черчилль Америка конгресӗн руководителӗсемпе вӑрҫӑри лару-тӑру ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе канашланӑ. Канашлура Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен вице-президенчӗ Уэллес, представительсен палатин председателӗ Рейнберн, сенатри ютҫӗршыв ӗҫӗсен комиссийӗн председателӗ Коннэли, сенатри республиканецсен лидерӗ Макнэри тата конгресри икӗ партийӗн те ытти представителӗсем пулнӑ. Канашлу хыҫҫӑн конгресс членӗсем печет представителӗсене ҫапла каланӑ: вӗсем пӗтӗм тӗнчери лару-тӑру ҫинчен, иккӗмӗш фронт ыйтӑвӗ ҫинчен тата Ҫурҫӗр Африкӑри лару-тӑру ҫинчен сӳтсе явнӑ, тенӗ.

АНГЛИЧАНСЕН ТАТА ТӖНӖЛ ДЕРЖАВИСЕН МӖН ЧУХЛӖ САЛТАК ТЫТКӐНА ЛЕКНИ

ЛОНДОН, июнӗн 25-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, 1942 ҫулти март уйӑхӗччен англичансем тӗнӗл держависен ҫарӗсенчи салтаксене 520 пин ҫынна ытла тыткӑна илнӗ, вӗсем хушшинче чи йышли итальянецсемпе колонисенчен илсе пынӑ войскӑсем тата нумаях мар нимӗҫсем пур.

Англи войскисен ҫакӑн чухлӗ ҫын тыткӑна лекнӗ: Дюнкеркра—40 пин, Норвегире — 950 ҫын, Грецире тата Критт утравӗ ҫинче—15 пин, Ливире (хальхи кампани, Тобрука шутламасӑр) —9.800 ҫын тата Тобрукра—25 пин ҫын.

США ФЛОЧӖН ҪЫН ТӖЛӖШПЕ ПУЛНӐ ҪУХАТӐВӖСЕМ

ВАШИНГТОН, июнӗн 26-мӗш. (ТАСС). Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен тинӗс-ҫар министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Пӗрлешӳллӗ Штатсен тинӗс-ҫар флочӗн мӗнпурӗ 10.000 ҫын ытла пӗтнӗ.

БЕРЛИН СТОКГОЛЬМПА ТЕЛЕФОН ТӐРӐХ ҪЫХӐНМА ЧАРӐННИ

СТОКГОЛЬМ, июнӗн 26-мӗш. (ТАСС). «Хельгенс Нюхетер» пӗлтернӗ тӑрӑх, июнӗн 24-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле Берлин Стокгольмпа телефон тӑрӑх ҫыхӑнма чарӑннӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

МТС директорӗсемпе старши механиксен канашлӑвӗ

Тырпулсене пухса кӗртес хӗрӳ ӗҫ вӑхӑчӗ ҫывхарса килет пулсан та, республикӑри чылай машинно-тракторнӑй станцисем комбайнсемпе молотилкӑсене юсас ӗҫе сӳрӗккӗн туса пыраҫҫӗ-ха. МТС директорӗсемпе старши механиксен июнӗн 25-мӗшӗнче Шупашкарта пулса иртнӗ канашлӑвӗнче ҫакӑ уҫҫӑнах курӑнчӗ.

Канашлу Етӗрне, Чкаловски, Сӗнтӗр тата Хӗрлӗ Чутай МТС директорӗсен отчечӗсене итлерӗ. Машинно-тракторнӑй станцисенче горючипе сӗрмелли япаласене перерасходласси ҫинчен, ку тӗлӗшпе СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ июнӗн 20-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленине мӗнле пурнӑҫа кӗртсе пырасси ҫинчен канашлура ЧАССР Ҫӗрӗҫ халӑх комиссарӗ Малов юлташ доклад туса пачӗ.

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн бюровӗ 1941 ҫулти декабрӗн 23-мӗшӗнче йышӑннӑ постановлени тӑрӑх машинно-тракторнӑй станцисен тракторсене юсаса пӗтернӗ хыҫҫӑнах, комбайнсен моторӗсене юсас ӗҫе организацилемелле пулнӑ. Анчах ҫак ӗҫе чылай МТС директорӗсем тивӗҫлипе тытӑнман. Комбайнсен моторӗсене ҫуркуннех юсама май пулнӑ пулсан та, ҫак ӗҫе июнь уйӑхӗнче кӑна тытӑннӑ. Июнӗн 20-мӗш тӗлне республикипе 368 комбайнран 61-шне кӑна юсанӑ, комбайнсен моторӗсене 111-шне ҫеҫ ремонтланӑ. 13 МТС паян куна ҫитсе пӗрер комбайн та юсаса кӑларман.

Етӗрне, Ҫӗрпӳ, Куславкка, Шӑмӑршӑ, Красноармейски, Сӗнтӗр, Шупашкар районӗсенчи машинно-тракторнӑй станцисем ҫулран ҫул япӑх ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Кӑҫал та вӗсем хӑйсен ӗҫне тивӗҫлипе кӑтартмаҫҫӗ-ха. Етӗрне МТС-ӗн директорӗ Щетинин юлташ канашлура отчет тунӑ чухне комбайнсемпе молотилкӑсене юсас ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен нимӗнех те калаймарӗ. МТС-ӑн 7 комбайн кӑна пулсан та тата вӗсене ремонтлама июнӗн 5-мӗшӗнче тытӑннӑ пулсан та, МТС паянхи кун тӗлне пӗр комбайн та юсаса ҫитермен. Щетинин юлташ тунӑ отчетран ҫакӑ ҫеҫ уҫҫӑн курӑнчӗ: вӑл тырпулсене пухса кӗртес кампанире МТС умӗнче тӑракан ответлӑ ӗҫсене туйса илмен-ха. Щетинин юлташ комбайнсене юсама ку ҫук та ҫеҫ калаҫрӗ. Анчах комбайнсен пайӗсене тӑвассине, юсаса ҫӗнетессине вырӑнта мӗнле организацилени ҫинчен шарламарӗ. Калама та пултарайман, мӗншӗн тесен вӑл вӗсене вырӑнта тӑвас ӗҫе организацилемен. Етӗрне МТС-ӗ кадрсем хатӗрлес тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫлет. Машиноведсем, барабанщиксем, весовщиксем ҫитмеҫҫӗ пулсан та, МТС вӗсене вӗрентме курссем организацилемен. Сӗнтӗр, Чкаловски МТС-сенче те комбайнсене, молотилкӑсене юсас ӗҫ начар пулса пырать. Чкаловски МТС-ӗн 25 комбайн пулсан, паянхи куна 6-шне ҫеҫ ремонтланӑ. Чкаловски МТС-ӗн руководителӗсем комбайнсене юсас ӗҫе кирлӗ пек ертсе пымаҫҫӗ. Отчет тума тухнӑ Чкаловски МТС-ӗн директорӗ Архипов юлташ хӑйӗн МТС-ӗнче комбайнсене юсас ӗҫ мӗнле пынине те, хӑш комбайна мӗнле ремонт тума кирлине те пӗлмест. Ҫакӑ ӗнтӗ вӑл МТС директорӗ комбайнсене юсас ӗҫе йӑлтах колхозсем ҫине тӳнтернинчен килсе тухать. Кунти комбайнсем колхозсенче сапаланса лараҫҫӗ. Паллах, вӗсене юсас ӗҫе ертсе пыма кун пек чухне йывӑр, унти бригадӑсем куллен мӗнле ӗҫленине те вӑхӑтра пӗлме ҫук. СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ йышӑннӑ постановлени комбайнсене юсас ӗҫе колхозсенче тума чарать. Техника тӗлӗшӗнчен пӑхса тухса тасатас тата сӗрсе йӗркелес ӗҫе кӑна комбайнсем ӗҫленӗ участокрах тума юрать. Тӗплӗрех ремонта МТС мастерскойӗнче тумалла. Ҫакна Чкаловски МТС шута илмен, комбайнсене вӑхӑтра МТС-а илсе пыман пирки халӗ ӗнтӗ ремонт ӗҫӗ вӑраха кайса пырать.

Сӗнтӗр МТС-ӗн руководителӗсем государство панӑ машинӑсене типтерлӗн пӑхса усрассишӗн хӑйсем те тӑрӑшмаҫҫӗ, трактористсемпе комбайнерсене те вӗрентмеҫҫӗ. Мӗн чухлӗ сӑнчӑр, мӗн чухлӗ чӗн, машинӑсен паха пайӗсем усӑсӑр пӗтсе пыраҫҫӗ. Сӗнтӗр МТС-ӗ иртнӗ ҫул, уйри ӗҫсене пӗтерне хыҫҫӑн, комбайнсене епле пулнӑ ҫапла пӑрахнӑ. Сӑнчӑрӗсем тутӑхса ларнӑ, чӗнӗсем типсе ҫурӑлса таталса пӗтнӗ. 4 комбайнӑн полотнисене ҫухатнӑ. Государствӑн машинисем ҫине ҫакӑн пек пӑхни — преступлени пулса тӑрать.

Канашлура Наркомзем политсекторӗн начальникӗ Чернов юлташ чылай МТС-сем комбайнсене юсас ӗҫре кадрсемпе усӑ курма пӗлменни ҫинчен каларӗ. Хӑшпӗр МТС-сенче комбайнсене комбайнерсем хӑйсем юсаҫҫӗ. Комбайнсене тӗплӗн юсама пӗлеҫҫӗ-и вӗсем, пӗлмеҫҫӗ-и, пурӗ пӗрех комбайнерӑн хӑйӗн комбайнне юсамалла. Ремонт ӗҫӗнче ыйтӑва ҫакӑн пек лартни тӗрӗс мар, ремонт ӗҫне опытлӑ, машинӑна лайӑхрах пӗлекен комбайнерсене ытларах хутшӑнтармалла. Вӗсем пулӑшнипе кашни комбайна ҫирӗп юсаса ҫитермелле. Пур комбайнсене те правительство кӑтартса панӑ срок тӗлне юсаса пӗтермелле. Кашни комбайн ҫумнех улӑма пухса купаҫ-купан пӑрахса хӑваракан тумалла, зерноуловительсем лартмалла тата выртса пулнӑ тырра та тикӗс вырса пыракан тумалла.

Кадрсем хатӗрлес ӗҫ МТС директорӗсен ответлӑ ӗҫӗ. Вӗсем хӑйсене валли пултарулла кадрсем хатӗрлемелле. Хӑшпӗр МТС руководителӗсем ӗҫри ҫитменлӗхсене ҫӗнӗ кадрсем ҫине ӳпӗнтерме пӑхаҫҫӗ. Ку ӗнтӗ япӑх руководительӗн ӗҫӗ кӑна. Никам та мар, ҫӗнӗ кадрсем кӑҫалхи ҫуракинче кӑтартуллӑн, пысӑк та паха тӗслӗхсем кӑтартса ӗҫлерӗҫ. Ӑҫта кадрсене хатӗрлес ӗҫе тимлӗн туса пыраҫҫӗ, вӗсене ӗҫре вӗрентсе, пулӑшса пыраҫҫӗ, ҫавӑнта ӗҫ ӑнӑҫлӑн пулса пырать, руководительсем те ҫӗнӗ кадрсен паха ӗҫӗпе тивӗҫлипех мухтанаҫҫӗ. Машиноведсем, барабанщиксем, кӗлтесене парса тӑракансем хатӗрлекен курссене халех организацилемелле. Вӗсене ҫителӗклӗ таран вӗрентсе хатӗрлесен кӑна кӑҫал эпир авӑн ҫапас ӗҫе вӑхӑтра туса иртерӗпӗр, молотилкӑсем пысӑк тухӑҫлӑн, пӗр чарӑнусӑр ӗҫлеме пултарӗҫ.

Канашлура ВКП(б) Обкомӗн секретарӗ Пивоваров юлташ сӑмах тухса каларӗ. Вӑл республикӑри машинно-тракторнӑй станцисен ҫуракинчи ӗҫӗсене тишкерсе тухрӗ тата вӗсем умӗнче тӑракан малашнехи задачӑсене кӑтартса пачӗ.

Кашни машинӑна пӗтӗм вӑйӗпе ӗҫлеттермелле, ялхуҫалӑхӗнче ӗҫлеме пултаракан ҫынсене шутне те мобилизацилемелле. Пӗтӗмӗшлӗн, саланчӑклӑн мар, массӑна ӗҫре конкретно ертсе пымалла. Вӑя шеллемесӗр, ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлекен ҫынсене вӑхӑтра палӑртса пырас пулать, вӗсен опытне масса хушшинче сарса ӗҫре пӗтӗмӗшпе пысӑк ҫӗкленӳ тумалла. Пивоваров юлташ МТС руководителӗсен комбайнсемпе молотилкӑсене юсас ӗҫӗн хӑвӑртлӑхне ӳстерме кирлине кӑтартрӗ. Ҫавӑн пекех колхозсем тырпулсене пухма хатӗрленсе ҫитнипе ҫитменнишӗн машинно-тракторнӑй станцисем ответлӑ пулнине палӑртрӗ. Наркомземӑн управленийӗсем колхозсемпе МТС-сене начар ертсе пынине палӑртса ҫивӗччӗн критикӑларӗ.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ комбайнерсене ӗҫшӗн натурӑпа хушса тӳлемелле туни машинно-тракторнӑй станцисенчи комбайнерсемпе трактористсен ӗҫлес хаваслӑхне татах та вӑйлӑн ҫӗклерӗ. Вӗсем Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса хӑйсем ҫине пысӑк обязательствӑсем илеҫҫӗ.

Республикӑн уйхирӗсенче пуян тырпул ҫитӗнет. Пур тырӑсем те кӑҫал пысӑк тухӑҫлӑ пулассине шантараҫҫӗ. МТС коллективӗсен, трактористсемпе комбайнерсен ҫак кунсенче тырӑ вырмалли, авӑн ҫапмалли мӗнпур машинӑсене юсаса ӗҫе ямалла. Пуян тырпула вӑхӑтра, тӑкаксӑр пуҫтарса кӗрессишӗн, ҫак ӗҫе организованно иртттерессишӗн тимлӗн ӗҫлер.

СЕГОДНЯ И ЕЖЕДНЕВНО
с 9 часов утра до 9 часов вечера
открыт
ПЕРЕДВИЖНОЙ ГОСЗВЕРИНЕЦ.
Кормление зверей в 7 час. вечера.
Адрес: Набережная Волги, возле билетной кассы пароходства.

Чувашской конторе
ГЛАВЗАГОТСКОТ ЦЕНТРА
на постоянную работу требуется старший зоотехник. Оплата по госнормированию.
Обращаться по адресу: г. Чебоксары, Канашская, 21. Тел. № 2-34, 6-12.
Чувашская контора.

ЧЕБОКСАРСКИЙ ФИЛИАЛ ГОРЬКОВСКОГО УЧЕБНОГО КОМБИНАТА Ц. С. У. ГОСПЛАНА СССР
об'являет набор курсантов на отделения:
1) Подготовки бухгалтеров — принимаются лица с 9—10 кл. образованием и лица, имеющие образование не ниже 7-летки, с практическим стажем счетной работы.
Срок обучения 6 месяцев. Плата за весь курс обучения 500 руб.
2) Подготовки счетоводов — принимаются лица с 7-летним образованием. Срок обучения 4 месяца. Плата 320 рублей.
Обучение без отрыва от производства.
Лица, закрепившиеся за определенными организациями, будут учиться бесплатно и обеспечены стипендией.
Заявления принимаются до 10-го июля 1942 года.
Адрес: гор. Чебоксары, Канашская, 21.
2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, пропагандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 5—31, ялхуҫалӑх пайӗн — 3—99, комсомол пурнӑҫ пайӗн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 862 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 58 64 п. л.